**Хула пурнăçĕн хăрушсăрлăхĕ : [«Хула пурнăçĕн хăрушсăрлăхĕ» ятпа Наци библиотекинче право сехечĕ иртни çинчен ]**

Çакăн пек ятпа Наци библиотекинче право сехечĕ иртрĕ. Чăваш Ен ШĔМĕпе тĕп вулавăш йĕркелекен çакăн йышши мероприятисем çĕнĕлĕх мар. Пулас юристсем - паянхи студентсем тата хăйсен право пĕлĕвне ÿстерессишĕн çине тăракансем вĕсене чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

Инкек кашни кĕтесрех сыхлать...
Шавлă хулари пурнăç ялтипе танлаштарсан сисĕнмеллех кăткăс - кăна пурте пĕлеççĕ. Калаçăва çак ыйту тавра ирттерессине çавăнпах ăнсăртран суйламан. Йĕрке хуралĕ иртнĕ çул шута илнĕ преступленисен 73 процентĕ хулара тата хула йышши поселоксенче пулнă. ШĔМĕн обществăри йĕркене тивĕçтерессипе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Валерий Журавлев пухăннисене инкекре - вăрă-хурах тапăнсан, теракт х*ăрушлăхĕнче* т. ыт. те - хăйсене мĕнле тытмаллине ăнлантарчĕ. «Нихăçан та çухалса каймалла мар», - çакăн пек сĕнÿ пулчĕ.

Иртнĕ çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе преступленисен 59 процентĕ ниçта та ĕçлеменнисен айăпĕпе пулнă. Валерий Николаевич ют пурлăха шăпах çакнаш-каллисем хапсăннине пĕлтерчĕ. Сăмах май, вăрлани, çаратни - преступленисен хушшинче чи анлă сарăлнисем - пĕтĕм шутран 47 процент таран. Ун хыççăн - «ытти йышшисем» - иккĕмĕш вырăн йышăнаççĕ е 18 процент. Экономикăпа çыхăннисем - 15 процента яхăн, хĕнени - 10 ытларах; вĕлерессипе хăратнă, ят-сума вараланă тĕслĕх кăшт сахалрах - 8 процент. Çынна вĕлернисен 70 процентĕ тата сывлăха пĕлсе тăрсах сиен кÿнипе çыхăннисен 40-шĕ эрех-сăрапа иртĕхекенсен айăпĕпе пулнă.

Хулара вĕренекен ачи-пăчишĕн ашшĕ-амăшĕ сăлтавсăрах пăшăрханмасть. Ялтан аякра, шавлă, хĕвĕшÿллĕ пурнăç криминалсăр мар. Каварлашнă ушкăнсем обществăшăн уйрăмах хăрушă. Пĕлтĕр унашкаллисем йĕркеленĕ 316 преступление шута илнĕ, унпа çыхăннисене - 94-шне - саккунпа явап тыттарнă. Вĕсенчен 19-шĕ - ертÿçĕсем.

Йĕрке хуралĕн ĕçченĕсем çине тăрсах ыйтаççĕ - вăрă-хураха хамăра тапăнма, пурлăха туртса илме шанăç памалла мар. Халăх йышлă çÿрекен транспорт хатĕрĕсенче «кĕсьеçĕсем» йăрă хуçаланаççĕ. Хĕрсен вара сумкăна хул пуççи çине çакса утмалла мар. Тĕттĕм вăхăтра ăна пушшех туртса илсе тарма ансат. Урамра телефонпа вăрах пуплеме кăмăллакансем пирки те çакнах каламалла. «Карас телефонне, пысăк укçа-тенке шăлаварăн хыçалти кĕсйине нихăçан та ан чикĕр», - терĕ пакунлă лектор.

Çулталăк пуçланнăранпа транспорт хатĕрĕсемпе çыхăннă 40 ытла инкеке шута илнĕ. Вĕсенче 2 çын пурнăçĕ татăлнă, 52 аманнă. Çул-йĕрпе патруль службин аслă инспекторĕ Анастасия Никитина çул çинчи пăтăрмахсем пĕлтĕрхинчен 20 процент ÿснине палăртрĕ. Çурри ытла, е 59 процент, çуран çÿрекенсене таптанипе çыхăннă - пĕр çын вилнĕ, 25 суранланнă. 14 тĕслĕхре çуран çÿрекенсем хăйсем

айăпли паллă. Тепĕр 5 инкек -водительсем «зебра» урлă каçнă чухнехи йĕркене пăхăнманнипе. Транспорт хирĕç килекен йĕр çине тухни, хăвăртлăха виçерен ирттерни пур чухне те синкерсĕр вĕçленмест. Пăтăрмахсен виççĕмĕш пайĕ транспорт хатĕрĕсем пĕр-пĕрин çине пырса кĕнипе сăлтавланнă. Инспекторсем çавăнпах хăрушсăрлăх пиçиххипе çыхăнма, ачасене ятарлă креслора илсе çӳреме çине тăрса сĕнеççĕ. «Тин çеç удостоверени илнĕ водительсем авари хăрушлăхĕн ушкăнĕнче. Чылай инкек шăпах вĕсен айăпĕпе пулать те», - терĕ Анастасия Николаевна. Ку цифрăсем пĕлтĕрхи çак шайран икĕ хут ӳснĕ. Ĕнентерме тĕслĕхсем илсе кăтартрĕç. Асфальт çула ятарлă хутăш сапаççĕ пулин те вăл чылай чухне шуçлак. Транспорта çийĕнчех чарма кансĕр. Тата кăçалхи хĕлле юрлă, кĕрт хыçĕнчен чупса тухакана курса ĕлкĕрме водителе питĕ йывăр. Çул çинчи япăх условисене пула кăçал - 16 авари, çакă та пĕлтĕрхинчен 2 хут нумайрах. Вĕсем 24 çын пурнăçне сиен кунĕ. Сăнанă тăрăх эрне кун, шăмат кун тата вырсарни кун - уйрăмах инкеклисем. Кăнтăрлахи вун икĕ сехетрен пуçласа икĕ сехетчен аварисене пушшех йышлă шута илеççĕ.

Çынна автомобильпе кăна мар, велосипедпа та таптаса амантма пулать. Иртнĕ çул вĕçĕнче кăна-ха акă вун улттăри йĕкĕт «Шупашкар: 500 çул» паркра ярăннă чух çулталăкри хĕр ача çине пырса кĕнĕ. Пĕчĕкскерĕн пуç мими сиенленнĕ. Ашшĕ-амăшĕн велосипед туянса париччен çул-йĕр правилисене хăнăхтармалла. 14 çул тултарнисем тротуарпа кăна çӳрес темĕç - пысăк çул çине тухма ирĕк пур. Юр кайса пĕтнĕ-пĕтмен яшсем скутерĕсене кĕрлеттерсе тухĕç. Ятарлă шлем тата хӳтĕленмелли хатĕрсем кашнинех пулмалла.

Çулпа пынă чух çеç мар, çурт картишĕнче те асăрханулăха çухатмалла мар. Автотранспорта каялла чакарнă вăхăтра водитель хыçалтине пур чухне те лайăх курмасть. Кузов пысăк пулсан пушшех те. Ун хыçĕнче вара, калăпăр, пĕчĕк ача вылять е велосипедпа ярăнать. Кунашкал инкек темиçе çул каялла Шупашкарта пулнăччĕ.

Йĕрке хуралçисем çынсен пурнăçне сыхлас, пурлăхне упрас енĕпе пысăк ĕç тăваççĕ. Çапах та хăрушсăрлăхшăн çыннăн чи малтан хăйĕн тимлĕ пулмаллах.

*Вышинская, Т. Хула пурнăçĕн хăрушсăрлăхĕ : [«Хула пурнăçĕн хăрушсăрлăхĕ» ятпа Наци библиотекинче право сехечĕ иртни çинчен ] / Т. Вышинская // Хыпар. – 2011. – 19 нарăс. – С. 3.*